27-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 20 пус.

1944
СЕНТЯБРЬ
2
ШАМАТКУН
173(6668) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Пӗтӗм вӑйпа, пӗтӗм пултарулӑхпа!

Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенчен савӑнӑҫлӑ та ырӑ хыпарсем килсе тӑраҫҫӗ. Паттӑр Хӗрлӗ Ҫар хамӑр Тӑван ҫӗршыва пӗтӗмӗшпе пекех ӗнтӗ нимӗҫ захватчикӗсенчен тасатса ҫитерет. Ҫак кунсенче пирӗн мухтавлӑ фронтовиксем тӑванла Молдаван ССР-ӗн столицине Кишинев хулине, Украинӑн юлашки область центрне Измаил хулине ирӗке кӑларса, тӑшманӑн Румынири тӗреклетнӗ паха пункчӗсене Галац, Браилов, Тульча, Сулина, Констанца, Плоешти тата ытти хуласене туртса илчӗҫ. Августӑн 31-мӗшӗнче совет ҫарӗсем Румыни столицине — Бухарест хулине пырса кӗчӗҫ. Калама ҫук анлӑ фронтӑн ҫурҫӗр пайӗнче те Хӗрлӗ Ҫар тӑшмана хӑйӗн йӑви патнелле хӑвалать. Тискер те хура ҫӗлене ӗмӗрлӗхех тӗп тӑвас кунсем инҫе мар ӗнтӗ! Пӗтӗм халӑх кӗтекен ҫӗнтерӳ кунӗсем кунран-кунах ҫывхарса килеҫҫӗ. Паттӑррӑн та хастаррӑн кӗрешет пирӗн Ҫар!

Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӗвӗсем весем — пирӗн ҫӗнтерӳсем, пӗтӗм халӑх ҫӗнтерӗвӗсем. Ҫавӑнпа эпир вӑл ҫӗнтерӳсемпе тивӗҫлипех савӑнма пултаратпӑр, савӑнатпӑр та. Вӗсем пирӗн кӑмӑла-туйӑма ҫӗклеҫҫӗ, пире тылра хастарлӑн ӗҫлеме, ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ тума хавхалантараҫҫӗ. Ҫак хавхаланупа ӗҫлеҫҫӗ те ӗнтӗ фабрикӑсемпе заводсенчи тата мастерскойсемпе артельсенчи стахановецсем! Ҫак хавхаланупа ӗҫлеҫҫӗ тырпул пухса кӗртес ӗҫре малта пыракан Красноармейски, Чурачӑк, Шупашкар, Ҫӗрпӳ тата ытти районсенчи колхозниксемпе колхозницӑсем! Вӗсен лайӑх ӗҫне курса, вӗсен тылри ҫӗнтерӗвӗсем ҫинчен пӗлсе, Хӗрлӗ Ҫарӑн паттӑр воинӗсем тивӗҫлипех савӑнма пултараҫҫӗ, савӑнаҫҫӗ те. Мӗншӗн тесен пирӗн ҫӗнтерӳсем вӗсем — Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӗвӗсем, пӗтӗм халӑх ҫӗнтерӗвӗсем. Ҫав ҫӗнтерӳсем пирӗн улӑп-воинсене фронтра тӑшмана пӗтерсе тӑкма хавхалантараҫҫӗ, вӗсен кӑмӑл-туйӑмне ҫӗклеҫҫӗ. Пирӗн рабочисемпе колхозниксем паттӑррӑн ӗҫленине курса, фронтовиксем ҫапла калаҫҫӗ: «Аван ӗҫлет пирӗн тыл, аван пулӑшать пире»!

Ҫапла ӗнтӗ пирӗн фронтпа тылӑн пӗрлӗхӗ, вӗсем пӗтӗм вӑйпа, пӗтӗм пултарулӑхпа та ӑсталӑхпа кӗрешни тата ӗҫлени тӑшмана ҫӗнтерме май туса парать. Халӗ ӗнтӗ ҫӗнтерӳ пирӗн алӑра пуласси пирки иккӗленекен ҫынсем пирӗн ҫӗршывра ҫук пулӗ. Ҫакӑ вӑл ӑнланмалла та. Анчах ҫак ҫӗнтерӳ ҫӑмӑллӑнах килӗ, текех ытлашши ҫунса ӗҫлемесен те юрать, халӗ ӗнтӗ мирлӗ пурнӑҫ сывлӑшӗпе сывласа илме те вӑхӑт ҫитрӗ тесе хӑйсене лӑплантарма е тата ӗҫе сӳрӗклетме шутлакан юлташсем калама ҫук пысӑк йӑнӑш тӑваҫҫӗ. Тӑшман халӗ те вӑйлӑ-ха. Вӑл хаяр контратакӑсем тӑвать. Тӗпсӗр шӑтӑка ӳкес мар тесе, вӑл кашни хулапа ялтах тытӑнса тӑма, май пур таранах хирӗҫ тӑма хӑтланать. Малашне вӑл татах та ытларах урса пырӗ. Ӑна ҫӗнтерме нумайрах вӑй кирлӗ пулӗ. Анчах ҫакна ӑнланман, мирлӗ сывлӑшпа сывласа яма васкакан юлташсем тӗл пулкалаҫҫӗ-ха пирӗн хушӑра. Унсӑрӑн мӗнпе ӑнлантарса памалла-ха колхоз е район тырпул пухса кӗртес ӗҫре юлса пынине?

Республикӑри Первомайски, Улатӑр, Кувакино, Ҫӗмӗрле, Тӑвай, Йӗпреҫ, Советски районсем тырӑ вырас ӗҫре юлса пыраҫҫӗ, кӗлте кӳрсе капана хывас, аван ҫа- [illegible]

[illegible]

ӑна никам та пытарма шутламан. Анчах ӗҫлекенсем ҫитмеҫҫӗ тесе, хамӑр умра тӑракан ӗҫсене тумасӑр хӑварма пултаратпӑр-и-ха эпир? Кама кирлӗ ҫавӑн пек сӳпӗлтетсе, алла усса ларни? Вӑрнар, Шупашкар, Ҫӗрпӳ тата ытти районсем пилӗк кун хушшинче 600—700 тонна тырӑ пама ӗлкӗреҫҫӗ пулсан, вӗсен районӗсемшӗн вӑрҫӑ ҫук-им вара? Ҫав вӑхӑт хушшинчех Комсомольски район государствӑна мӗн пурӗ те 195 тонна ҫеҫ, Первомайски район 43 тонна ҫеҫ тырӑ леҫсе панӑ пулсан, ҫав районсенчен фронта пӗр ҫын юмиччӗнех тухса кайнӑ-им вара? Е вӗсем Красноармейски, Ҫӗрпӳ, Вӑрнар, Шупашкар районӗсене кайса тырӑ турттарма пулӑшнӑ-и? Первомайски район 43 тонна турттарнӑ вӑхӑтра Вӑрнар районӗ 755 тонна турттарма ӗлкӗрни мӗн ҫинчен калать-ха? Ҫакӑ вӑл, паллах, ӗҫлекенсем Вӑрнар районӗнче ытлашши пулни ҫинчен мар (вӗсем унта та ҫитмеҫҫӗ) ӗҫлекенсене вырнаҫтарса тӑратма, ӗҫе организацилеме пӗлни ҫинчен калать. Пур ӗҫсем те вӑхӑтра пулса пычӑр тесен, чи малтан, ялти ӗҫлеме пултаракан ҫынсене пурне те, — ваттисене те, ҫамрӑккисене те, — тырпул пухса кӗртес, государствӑна тырӑ парас ӗҫе явӑҫтармалла, вӗсене тӗрӗс вырнаҫтарса тӑратмалла, вӗсен ӗҫ тухӑҫлӑхне ӳстермелле. Ҫак чӑнлӑха юлса пыракан районсемпе колхозсенчи руководительсем ҫителӗклех ӑнланаҫҫӗ, анчах ҫителӗклӗ пурнӑҫа кӗртмеҫҫӗ. Ҫакӑ вара вӗсен пысӑк ҫитменлӗхӗ пулса тӑрать.

Юлса пыракан районсенче е колхозсенче ӗҫлекен тепӗр юлташсем хӑйсем начар ӗҫленине лашасем ҫитменнипе ӑнлантарса пама пӑхаҫҫӗ. «Тырӑ кӑҫал тухӑҫлӑ пулчӗ, тӑрӑшсах турттарнӑ пулӑттӑмӑр, анчах лашасем ҫитмеҫҫӗ-ха», теҫҫӗ ҫав юлташсем. Ҫакӑн пек калаҫни вӑл пачах тӗрӗс мар, вӑл — кахалсен, саботажниксен юрри, чӑн-чӑн большевиксем халӗ, Тӑван ҫӗршывшӑн юнлӑ кӗрешӳ пынӑ вӑхӑтра, ҫавӑн пек калаҫма пултараймаҫҫӗ. Ун пек калаҫакан юлташсем ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗпе СССР Совнаркомӗ «1944 ҫулта тырпул пухса кӗртесси тата ялхуҫалӑх продукчӗсем хатӗрлесси ҫинчен» йышӑннӑ постановлени манса каяҫҫӗ, пур пек лашасемпе тата ытти транспорт вӑйӗпе тухӑҫлӑн усӑ курма тӑрӑшмаҫҫӗ, тырӑ турттарас ӗҫре колхозӑн тата колхозниксен вӑкӑрӗсемпе, ӗнисемпе усӑ курмаҫҫӗ. Сӑмахран, Вӑрмар районӗнчи юлташсем, пирӗн лашасемпе автомашинӑсем ытлашшипех тесе, мухтанма пултараймаҫҫӗ, анчах вӗсем таҫтан ҫӳлтен лашасемпе машинӑсем парасса та кӗтсе лармаҫҫӗ, хӑйсен пур пек турттӑм вӑйӗпе лайӑхрах ӗҫлеме тӑрӑшаҫҫӗ. Пӗр августӑн 27-мӗш кунӗнче кӑна вӗсем 216 вӑкӑрпа тата 508 лашапа 207 тонна тырӑ леҫнӗ. Комсомольски, Чкаловски, Первомайски районсем вара пилӗк кун хушшинче те ун чухлӗ турттараймаҫҫӗ. Намӑс мар-и-ха ӗнтӗ ҫак районсенче ӗҫлекен юлташсене?

Эпир нихҫан пулман хӑрушӑ вӑрҫӑ кунӗсенче пурӑнатпӑр. Ҫак вӑрҫа пула пирӗн ялхуҫалӑхӗ умне пысӑк йывӑрлӑхсем тухса тӑчӗҫ. Пирӗн ҫав йывӑрлӑхсем хыҫне пытанса лармалла мар, вӗсене чӑн-чӑн большевиксем пек ҫӗнтерсе пымалла, «ӗҫлекенсем ҫитмеҫҫӗ», «лашасем сахал» тесе сӳпӗлтетмелле мар.

[illegible]

Совет Союзӗн Маршалне Г. К. Жукова иккӗмӗш хут „Ылттӑн Ҫӑлтӑр“ медаль тата Совет Союзӗн Маршалне А. М. Василевские Ленин орденӗпе „Ылттӑн Ҫӑлтӑр“ медаль пани

Августӑн 29-мӗшӗнче Кремльте СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ Совет Союзӗн Геройне — Совет Союзӗн Маршалне Г. К. Жукова иккӗмӗш хут „Ылттӑн Ҫӑлтӑр“ медаль панӑ. [illegible]

Совет Информаци Бюровӗнчен

АВГУСТӐН 31-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНӐЙ СВОДКА

Августӑн 31-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем ПРАГАРАН ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман танкӗсемпе пехотин атакисене ӑнӑҫлӑн сирсе янӑ, унтан контратакӑсем тунӑ та хӑйсен позицийӗсене самаях лайӑхлатнӑ, РАДЗЫМИН хулипе чугун ҫул станцине тата РУДА, ЛОСЬ, РЕЙЕНТУВКА, АЛЕКСАНДРУВ, ЦЕГЕЛЬНЯ, ДЗЕЛЬНЫ, ЦЕМНЕ, ЗЕНОНУВ, ЗАГОСЬЦИНЕЦ ятлӑ ялсене туртса илнӗ.

УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем, ҫав тери хӑвӑрт наступлени туса пырса, ПЛОЕШТИ районӗнче тата ПЛОЕШТИРЕН кӑнтӑртарахра нимӗҫ ҫарӗсен группировкине аркатса тӑкнӑ та августӑн 31-мӗшӗнче БУХАРЕСТ хулине кӗрсе кайнӑ. Малалла наступлени туса пырса, фронт ҫарӗсем нимӗҫ захватчикӗсенчен халӑх пурӑнакан 250 пункта ытла ирӗке кӑларнӑ, вӑл шутра — БАДАРЛОДЖИ, ПАНАТАУ, РУШАВАЦУ, ПЫРСКОВУ, КЫНДЕШТИ, ЗОРЕШТИ, МАРИНГА, ТОХАНИ, РАКОВА, СЕЧУ, ПЛЯША, ЦИНТЯ, СТРЕЖНИКУ, БАТЕШТИ, МИРОСЛАВЕШТИ, БУФТЯ, СЭБЭРЕНИ, БРЭНЕШТИ ятлӑ пысӑк ялсем тата ПЫГСКОВУ, КЫНДЕШТИ, БУДА, ТИРАЖ, БРАЗИ, КИТИЛА-ДИНВАЛЕ, КОЗЕНИ, БРЭНЕШТИ, ФУНДУЛЯ ятлӑ чугун ҫул станцийӗсем. Августӑн 30-мӗшӗнче УКРАИНӐРИ 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫавӑрса илнӗ группировкӑран 7.000 нимӗҫ салтакӗпе офицерне ытла тыткӑна илнӗ. Тыткӑна илнисен шутӗнче нимӗҫсен 76-мӗш пехотнӑй дивизийӗн командирӗ, Яссы хулин комендантӗ ШТИНГЕЛЬ генерал-майор. Вилӗсем хушшинче нимӗҫсен 4-мӗш армейски корпусӗн командирӗн—пехота генералӗн МИТТАН виллине тупнӑ.

КОНСТАНЦА хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем, малалла наступлени туса пырса, МЕДЖИДИЯ, БАСАРОБИ ХАРАОМЕР, КАРМЕН-СИЛЬВА, МАНГАЛИЯ хулисене туртса илнӗ.

Фронтӑн ытти участокӗсенче разведчиксем шыраса ҫӳренӗ.

Августӑн 30-мӗшӗнче пирӗн ҫарсем мӗн пур фронтсенче нимӗҫсен 27 танкне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери тӑшманӑн 8 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Висла шывӗн сылтӑм хӗрринче Варшава хулипе юнашар ларакан Прагӑран ҫурҫӗр хӗвелтухӑҫнерехре тӑшман хӑйӗн лӳчӗркеннӗ чаҫӗсене ҫӗнӗ вӑйсем хушса панӑ та паян ирхине пысӑк вӑйсемпе пирӗн позицисене атакӑланӑ. Совет пехотинецӗсем, артиллерисчӗсем тата минометчикӗсем нимӗҫсене вӑйлӑн пеме тытӑннӑ, гитлеровецсен ирӗксӗрех васкасах каялла чакма лекнӗ. Тӑшмана халран янӑ хыҫҫӑн пирӗн ҫарсем ӑна хӑйне ҫурҫӗр енчен, хӗвелтухӑҫ енчен тата кӑнтӑр енчен вӑйлӑн пырапыра ҫапнӑ. Ҫине тӑрсах малалла куҫса пырса, совет чаҫӗсем Радзымин хули патне ҫитнӗ те хула урамӗсене вӑркӑнса кӗрсе кайнӑ. Пирӗн боецсем гитлеровецсене ҫуртсемпе укрепленисенчен ҫапа-ҫапа кӑларнӑ, вара каҫ пулса килнӗ тӗлелле Радзымин хулине пӗтӗмӗшпех туртса илнӗ. Радзымин вӑл шоссе ҫулӗсен паха узелӗ тата тӑшманӑн вӑйлӑ ҫирӗплетнӗ пункчӗ пулнӑ. Радзымин хулишӗн пынӑ ҫапӑҫура 800 нимӗҫ салтакӗпе офицерне вӗлерсе пӗтернӗ, 8 танк, хӑй тӗллӗн ҫӳрекен 3 тупӑ тата 15 хир туппи пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсенчен трофейсем тытса илнӗ, вӑл шутра 2 юсавлӑ танк, 11 хир туппи, 12 миномет тата боеприпассем нумай. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Украинӑри 2-мӗш фронт ҫарӗсем ҫав тери хӑвӑрт наступлени туса пынӑ. Бухарест хулине ҫурҫӗр енчен тата ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫ енчен хӳтӗлесе тӑракан юханшывсемпе усӑ курса, тӑшман хирӗҫ тӑнӑ. Советсен ҫӑмӑллӑн куҫса ҫӳрекен соединенийӗсемпе пехоти нимӗҫсен 153-мӗш пехотнӑй дивизине тата ытти соединенисемпе чаҫсене ҫӗмӗрсе тӑкнӑ та паян ирхине Румыни столицине — Бухарест хулине кӗрсе кайнӑ. Бухарестран ҫурҫӗртерехри вӑрмансенче пытанса юлма хӑтланакан нимӗҫсен пӗр-пӗринчен татӑлса пӗтнӗ, йӗркерен тухнӑ ушкӑнӗсене пирӗн ҫарсем шыра-шыра тупаҫҫӗ те пӗтерсе тӑкаҫҫӗ. Нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсем нумайӗшӗ хирӗҫ тӑма пӑрахнӑ, вӗсем хӳтлӗхсенчен тухаҫҫӗ те тыткӑна парӑнаҫҫӗ. Бухарест патнелле пымалли ҫулсем ҫинче нимӗҫ ҫарӗсен группировкине аркатса тӑкнӑ чухне совет чаҫӗсем трофейсем нумай тытса илнӗ, вӑл шутра хӗҫпӑшал, боеприпас тата тӗрлӗрен ҫар материалӗсем нумай. Бухарест хулинчи пӗтӗм халӑх Хӗрлӗ Ҫара кӗтсе илме урамсене тухнӑ. Хӗрлӗ Ҫар чаҫӗсем хула урамӗсенче питӗ лайӑх йӗркепе иртсе пынӑ.

* * *

Констанца хулинчен хӗвеланӑҫнерехре тата кӑнтӑртарахра пирӗн ҫарсем ҫаплах наступлени туса пынӑ. Пӗр соединени чаҫӗсем 40 километр таран малалла кайнӑ, нимӗҫсен пӗр-пӗринчен татӑлса кайнӑ темиҫе ушкӑнне пӗтерсе тӑкнӑ. Пӗр районра унти вӑрмана шӑртласа тухнӑ чухне пирӗн боецсем 620 салтака тата нимӗҫсен 200 офицерне тыткӑна илнӗ.

* * *

Хӗрлӗ Ялавлӑ Балтика флочӗн авиацийӗ тӑшманӑн Чудь кӳллинчи суднисене бомбӑсем пӑрахса штурмланӑ. Хӑй тӗллӗн ҫӳрекен ҫарсемпе вӑрҫӑ хатӗрӗсем турттарса пыракан пилӗк десант баржине тата пӗр катера шыва путарнӑ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче нимӗҫсен 9 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Берлинра черетлӗ пресс-конференцире ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерствин представителӗ Шмидт тухса каланӑ. Ҫак тахҫантанпах паллӑ пулса тӑракан ултавҫӑ хӑй ҫине вӑй ҫитерейми ӗҫ илнӗ. Вӑл тӗрлӗ майсемпе—Гитлер Германийӗн ҫапӑҫури лару-тӑрӑвӗ лайӑхланчӗ, тесе кӑтартса пама тӑрӑшнӑ, мӗншӗн тесен нимӗҫ ҫарӗсем «хӑйсен малалла инҫене тухса тӑракан позицийӗсене хӑварнӑ та кӗскелнӗ позицисем ҫине, ҫавӑнпа та нумай ҫирӗпрех пулса тӑракан позицисем ҫине чакнӑ», тенӗ.

Шмидт сӑмахӗсене пӗр минутлӑха та пулин ӗненес пулсан, ҫапла тухать: нимӗҫ ҫарӗсене Витебск патӗнче, Бобруйск патӗнче, Львов патӗнче, Кишинев патӗнче ҫӗмӗрсе тӑкни, пирӗн ҫарсем Хӗвелтухӑҫ Прусси чиккине, Варшава патне пырса тухни, нимӗҫсене Румынирен хӑваласа кӑларни — ҫаксем пурте фашистла Германишӗн усӑллӑ пулса тӑраҫҫӗ иккен. Тӗрӗссипе каласан, ҫавӑн пек ухмах сӑмахсене нимӗҫсен ют ҫӗршыв ӗҫӗсен министерстви кӑна сармасть. Ҫав министерствӑран ытти учрежденисем те, фашистсен хаҫачӗсем те юлмаҫҫӗ. Нимӗҫсен «Дурхбурх» ятлӑ ҫар хаҫачӗ ҫапла ҫырнӑ: «Фронт линине кӗскетсе пыни хирти почта ӗҫне ҫӑмӑллатать тата нимӗҫсен салтакӗсен тӑван ҫӗршыва ҫитмелли ҫулне кӗскетет». Фашистсен «Фелькишер Беобахтер» хаҫачӗ географи картине пӑхса тухнӑ чухне нимӗҫ ҫарӗсем хӑварнӑ территорие пачах та асӑрхамасть, вӑл ӗҫ ҫине тепӗр енчен пырса пӑхать. Хаҫат ҫапла ҫырать: «Фронт линийӗ кӗскелни вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчен тата экономика енчен те чылай усӑллӑ. Специалистсем каланӑ тӑрӑх, фронт линийӗ кӗскелнӗ хыҫҫӑн локомотивсем, гусеницӑллӑ машинӑсем тата моторсем час пӗтмеҫҫӗ, вӗсем нумай вӑхӑт хушши ӗҫлекен пулаҫҫӗ».

Чипер тӑнлӑ-пуҫлӑ ҫын гитлеровецсен ҫак сӑмахӗсене вуланӑ хыҫҫӑн кашниех ҫапла калать ӗнтӗ: ку вӑл — тӑнран тухса аташни, тет. Ку чӑнахах та идиотсем аташни пулса тӑрать. Хӑйсем пӗтес патне ҫитсе пынипе вилес пекех хӑраса ӳкнӗ гитлеровецсем темле ухмах сӑмахсем те каласа тултараҫҫӗ. Фронтра нимӗҫсен ҫарне кашни поражени кӳнӗ хыҫҫӑн фашистсен ултавҫисем чарусӑртарах та ухмахрах суяҫҫӗ.

А. А. Жданов генерал-полковникпа А. С. Щербаков генерал-полковника 1-мӗш степень Кутузов орденӗсене пани

Августӑн 13-мӗшӗнче Кремльте СССР Верховнӑй Совет Президиумӗн Председателӗ М. И. Калинин юлташ А. А. Жданов генерал-полковникпа А. С. Щербаков генерал-полковника 1-мӗш степень Кутузов орденӗсене панӑ. Вӗсене ку орденпа нимӗҫ захватчикӗсене хирӗҫ пыракан кӗрешӳ фронтӗнче командовани панӑ боевой заданисене кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртсе пынӑшӑн наградӑланӑ.

ВЦСПС секретариатӗнче

ВЦСПС секретариачӗ ҫапла йышӑнтарса панӑ: социальнӑй страховани шучӗпе пособисем тата пенсисем памалла тунӑ чухне ҫын Хӗрлӗ Ҫарта, Тинӗс-Ҫар Флотӗнче тата партизансен отрячӗсенче пулнӑ вӑхӑта та шута илмелле. Хӗрлӗ Ҫартан, е Тинӗс-Ҫар Флотӗнчен, е партизансен отрячӗнчен таврӑннӑ хыҫҫӑн виҫӗ уйӑх хушшинче ӗҫлеме кӗрсен, ҫав малта асӑннӑ вӑхӑта та пӗр тӑтӑш ӗҫлесе тӑнӑ вӑхӑт шутне кӗртеҫҫӗ. Хӗрлӗ Ҫара кайиччен е партизансен отрядне кӗриччен рабочи е служащи пулса ӗҫленисене те, ӗҫлеменнисене те ҫак йӗркепех пособи е пенси параҫҫӗ. (ТАСС).

Вылявсен икӗ тиражӗ

Августӑн 20-мӗшӗнче Мускавра Союзсен ҫуртӗн Октябрьски залӗнче вылявсен икӗ тиражӗ пулса иртнӗ: Виҫҫӗмӗш пятилетка заемӗн (Пӗрремӗш ҫулхи кӑларӑмӗн) 23-мӗш тиражӗ тата Виҫҫӗмӗш пятилетка Заемӗн (Иккӗмӗш ҫулхи кӑларӑмӗн) 19-мӗш тиражӗ пулса иртнӗ. (ТАСС).

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланчӗ

Вӗренӳ ҫулӗн малтанхи кунӗнче палӑрнӑ ҫитменлӗхсене ҫийӗнчех пӗтерер

Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланчӗ. Совет шкулӗ, вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи йывӑрлӑхсене ҫӗнтерсе пырса, ҫак вӗренӳ ҫулне начар мар хатӗрленсе кӗтсе илчӗ. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланиччен вӗренӗве явӑҫтармалли ачасене тепӗр хут хисепе илсе тухнӑ. Ҫакӑ вӑл вӗренме тивӗҫлӗ ачасене шкула явӑҫтарма май пачӗ. Ҫапла, Шупашкар районӗнчи Иккассинчи тата Кӳкеҫри шкулсенче 1-мӗш класа вӗренме илнисем малтанхи кун пӗтӗмпех шкула пынӑ. Ишлей, Октябрьски районсенчи шкулсенче те ачасене вӗренӗве начар мар явӑҫтарнӑ. Ишлей районӗнчи виҫӗ шкула 334 ача пымалла пулнӑ, вӗсенчен 324 ача пынӑ. 1-мӗш классене вӗренме илнисем пурте шкулсене вӑхӑтра ҫӳреме тытӑннӑ.

Шупашкар хулинче вӗренекенсене йышӑнса илес ӗҫе лайӑх организациленӗ. Виҫӗ вӑтам шкулти (арҫын ачасен 1-мӗшпе 2-мӗш, хӗрачасен 2-мӗш шкулӗсенчи) пуҫламӗш классене 534 ҫын пымалла пулсан, 569 ҫын пынӑ. Ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне арҫын ачасен 1-мӗш шкулӗ лайӑх хатӗрленнӗ. Ҫав шкулти классем таса та тирпейлӗ. Шкул килкартине те тасатса йӗркеленӗ. Шкула вӗренӳ ҫулӗ валли хатӗрлес тӗлӗшпе учительсемпе шкул директорӗ тимлӗн ӗҫленӗ.

Шкул работникӗсенчен чылайӑшӗсем вӗренекенсене лайӑх йышӑнса илес тӗлӗшпе ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлеҫҫӗ. Ҫапла, Шупашкарти арҫын ачасен 2-мӗш номерлӗ шкулӗнчи учительница В. Ф. Ковровская юлташ хӑйӗн класне педагогика лабораторийӗ пек йӗркеленӗ. Класа кӗрсенех ӑна ачасене ҫирӗп пӗлӳпе лайӑх воспитани пама кирлӗ пек организациленине туятӑн. Доскасене лайӑх сӑрӑсемпе сӑрланӑ. Партӑсем ҫинче чернильницӑсем тата ытти хатӗрсем пур. Стенасем ҫинче — ҫулпуҫсен портречӗсем. Ковровская юлташӑн класӗнчен учительсем сахал мар опыт илме пултараҫҫӗ.

Калас пулать, вӗренӳ ҫулӗн малтанхи кунӗ хӑшпӗр шкулсен ӗҫӗнчи ҫитменлӗхсене те кӑтартса пачӗ. Шупашкар районӗнчи Якимоври ҫичӗ ҫул вӗренмелли шкул августӑн 31-мӗшне ҫитсе те вӗренӳ ҫулне хатӗрленсе ҫитмен. Шкулта—йӗркесӗрлӗх, тасамарлӑх. Кантӑксене лартса пӗтермен, кӑмакасене юсаман. Ҫав шкул директорӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ Дормидонтова тата учительсем хӑйсен ответлӑхне туймасӑр ӗҫлеҫҫӗ. Райҫутӗҫ пайӗн пуҫлӑхӗ Михайлов юлташ та ҫав ҫитменлӗхсемпе килӗшсе ларнӑ пулас.

Шкул работникӗсемпе ҫутӗҫ организацийӗсен хисеплӗ задачи вӑл — вӗренӳ ҫулӗн малтанхи кунӗсенче палӑрнӑ ҫитменлӗхсене пӗтерсе, вӗренӳ ӗҫне лайӑх организацилесси пулать. Кашни учитель малтанхи кунсенчен пуҫласах хӑйӗн ӗҫне партипе правительство кӑтартса панӑ пек организацилеме тивӗҫлӗ. Вӗренекенсене дисциплинӑна, йӗркене пӑхӑнма вӗрентмелле, лайӑх вӗренме условисем туса памалла. Ҫамрӑк ӑрӑва воспитани парас тӗлӗшпе тӑракан задачӑсене пурнӑҫа кӗртессишӗн ответлӑха туйса, куллен тимлӗн ӗҫлесен ҫеҫ совет шкулӗн ӗҫне кӑтартуллӑн организацилеме пулать.

Т. ЕФРЕМОВ,
Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн пуҫламӗш тата вӑтам шкулсем енӗпе ӗҫлекен Управленийӗн начальникӗ.

Шкула пыман ачасем пулмарӗҫ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (Телефонпа). Вӗренӳ ҫулӗ пуҫланнӑ кун ачасен уявӗ пулса тӑчӗ. Шкулсен таса та ҫутӑ класӗсем ирех вӗренекенсен савӑнӑҫлӑ шавӗпе тулчӗҫ.

Районри нумай шкулсем ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне тӗплӗн хатӗрленсе кӗтсе илчӗҫ. Красноармейскинчи вӑтам шкулта пур классене те юсаса шуратнӑ, доскасене сӑрланӑ, вӗренекенсем валли кӗнекесем, тетрадьсем ҫителӗклӗ хатӗрленӗ. Уроксен расписанийӗсене курӑнмалли вырӑнсене ҫакса хунӑ. Ку шкулта вӗренӳ ҫулӗ те лайӑх пуҫланчӗ. Вӗренме илнӗ ачасем малтанхи кунах пурте шкула пухӑннӑ.

Уйрӑмӑнах кӑҫал 1-мӗш класа вӗренме илнӗ ачасем хытӑ савӑннине куратӑн. Ачасем таса кӗпесем, атӑ-пушмаксем тӑхӑнса пынӑ. Акӑ, Зинаида Трофимова хӑйӗн шухӑш-кӑмӑлӗсене хумханса каласа парать:

— Манӑн тахҫанах вӗренес килет, — тет вӑл, — пӗрремӗш класра вӗренмелли кӗнекесене анне мана пӗтӗмпех илсе пачӗ. Эпӗ вулама пӗлетӗп ӗнтӗ...

Шкул директорӗ тата учительсем вӗренӳ ӗҫне малтанхи кунсенчех лайӑх йӗркелессишӗн тӑрӑшаҫҫӗ. Вӗренекенсене шкулти йӗркесемпе паллаштарма тата дисциплинӑна пӑхӑнмашкӑн вӗрентме дежурнӑйсем уйӑрнӑ.

С. ШАДИН.

Колхозниксем шкулсене пулӑшаҫҫӗ

КӲГЕҪ, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (Телефонпа). Районри колхозсем шкулсене ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрленме тимлӗн пулӑшса пычӗҫ. Колхозниксемпе колхозницӑсем пулӑшнипе, Шӗмшерти, Иккассинчи, Альгешри, Ҫӗньялти тата ытти нумай шкулсен ҫуртӗсене юсанӑ, шкулсем валли вутӑ хатӗрленӗ. Чӑрӑшкассинчи «Крахмал» колхоз фронтовиксен ачисене пулӑшма 10 мӑшӑр ҫӑмата, 25 мӑшӑр ҫӑм алсасем, 17 кӗпе, пӗр центнер ҫӑнӑх, пӗр тонна ҫӗрулми, 50 килограмм купӑста, 20 килограмм какай, 10 литр сӗт панӑ. Вӗсен паха пуҫарӑвне районри ытти колхозсем те йышӑнаҫҫӗ.

Шкулсенче вӗренӳ ӗҫӗ ӑнӑҫлӑн пуҫланчӗ. Паян кӗҫӗн классенче вӗренекен пиншер ачасем партӑсем хушшине ларчӗҫ. Нумай шкулсенче вӗсем валли кӗнекесем, хут-кӑранташ ҫителӗклӗ хатӗрленӗ.

Ҫав вӑхӑтрах хӑшпӗр шкулсен руководителӗсем иртнӗ вӗренӳ ҫулӗнче пулнӑ ҫитменлӗхсене шута илмен-ха. Иртнӗ ҫулта 76 ача шкул тулашӗнче юлнӑ, 260 ача вӗренме пӑрахнӑ. Кӑҫал ҫавӑн пек ан пултӑр тесен, вӗренӳ ӗҫне малтанах лайӑх йӗркелемелле, ачасене вӗренме условисем туса памалла. Ҫак тӗлӗшпе Самуккассинчи, Шурккари тата ытти хӑшпӗр шкулсен работникӗсем ҫителӗксӗр ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем шкул ҫуртӗсене те юсаса пӗтермен. Ҫак шкулсен вӗренме тивӗҫлӗ кашни ачана шкула явӑҫтарас енӗпе те халех мерӑсем йышӑнас пулать.

Г. ПЕТРОВ.

Вӗренме тивӗҫлӗ ачасем шкул тулашӗнче ан юлччӑр

КАНАШ, сентябрӗн 1-мӗшӗ. (Телефонпа). Хулари шкулсем вӗренӳ ҫулне лайӑх хатӗрленнипе кӗтсе илчӗҫ. Шкул ҫурчӗсене юсанӑ, вӗренӳре кирлӗ хатӗрсене тупса хунӑ. Паян пур шкулсенче те кӗҫӗн классенче вӗренекенсем вӗренме тытӑнчӗҫ. Иккӗмӗш номерлӗ шкула вӗренме илнӗ ачасем пурте шкула пынӑ. Вӗсемсӗр пуҫне тата иртнӗ ҫулта вӗренме пӑрахнӑ е тӗрлӗ сӑлтавсемпе вӗренме кӗмен ачасем те шкула пынӑ.

Анчах та вӗренӳ ҫулӗн малтанхи кунӗнчех хӑшпӗр шкулсен ӗҫӗнче пысӑк ҫитменлӗхсем палӑрчӗҫ. 13-мӗш номерлӗ шкула вӗренме илнӗ ачасенчен 24-шӗ шкула пыман. Хӑшпӗр шкулсенче тетрадьсемпе нагляднӑй пособисем ҫителӗксӗр. Шкул директорӗсемпе ҫутӗҫ работникӗсен ҫав ҫитменлӗхсене халех пӗтермелле тӑвас пулать.

К. АНДРЕЕВА.

ШКУЛ ВӖРЕНӲ ҪУЛНЕ ХАТӖРЛЕНМЕСӖР КӖТСЕ ИЛЧӖ

Ҫур уйӑх каялла ҫак шкулта райҫутӗҫ пайӗн инспекторӗ Ф. Семенова юлташ пулнӑ. Шкул ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулне хатӗрринне инспектор акт ҫырса йышӑннӑ. «Классные помещения школы вполне готовы к учебным занятиям» тенӗ актра. Пӑхар-ха, тӗрӗслер-ха, ҫаплах-ши вара?

Пӗрремӗш класс. Ку класс парта хушшине чи пуҫласа ларакан 7—8 ҫулхи ачасене йышӑнмалла. Анчах вӑл хӑнасене йышӑнма хатӗр мар. 4 парта ҫӗмрӗк, счетӑн шӑрҫисем юхса тухаҫҫӗ, учитель умӗнчи сӗтелӗн ури тухса ӳкет.

Класра ҫил шӑхӑрса илчӗ. «Чӳречесем уҫӑ ӗнтӗ», — шутларӑм эпӗ. Анчах йӑнӑшнӑ, кантӑксем ванчӑк иккен. Пӗр чӳречере кӑна 5 ҫӗмрӗк, шкулӗпе ҫӗре те ҫитет пулӗ. Ҫӗмрӗк мар чӳречесем пӗре те ҫук, кунта вӑрҫӑ пулса иртнӗ темелле.

— Вӑрҫӑ мар, вӑйлӑ ҫил иртсе кайнӑ,— тет шкул директорӗ М. Толстова.

Толстова сӑлтав шырать. Ҫилпе шалти чӳречесен куҫӗсем ҫӗмӗрӗлмеҫҫӗ. Паллах, ку хуҫасӑрлӑха пӗлтерет.

Хуҫасӑрлӑх ытти ҫӗрте те паларать. Акӑ, сарай ҫийӗ йӑтӑнса аннӑ, картасем тӳнсе кайнӑ, тулти алӑка, алӑк хӑлӑпӗсене кӑларса илнӗ...

Толстова юлташ ку шкулта ҫӗнӗ ҫын мар, тӑваттӑмӗш ҫул ӗнтӗ заведующи пулса ӗҫлет. Паянхи куна ҫитсе те вӗренӳ ҫулне хатӗрленме тытӑнманни — вӑл хӑйӗн ӗҫне юратманнине, шкулшӑн тӑрӑшманнине пӗлтерет. Ытлах нимӗн те туман тенӗрен, ҫак кунсенче вӑл пӗр художнике шкул ҫуртне юсама илсе пынӑ. Художник виҫӗ доска сӑрланӑ, кантӑксем лартма тытӑннӑ.

— Аялти кӗпе саплӑкпе ҫӗтетӗп те ҫиелти кӗпене саплатӑп... — шӳтлет вӑл. Чӑнах та, вӑл шалти хутӑн кантӑкӗсене илет те тулти хута лартать. Директор хушнӑ та, аппаланать ӗнтӗ. Шалти хутсемсӗр епле хӗл каҫас тет-ши директор?

— Кантӑк ҫук, — тет Толстова. Анчах вӑл кантӑк тупас тӗлӗшпе нимӗн те туман. Халӗ, патне ҫитсен тин пӑхкала тӑрать, «саплӑка» вырӑнтан вырӑна куҫарса лартать.

Директорпа малта асӑннӑ инспектор актра тата ҫапла ҫырнӑ: «Будут организованы горячие завтраки, имеется 0,16 картофеля».

Ҫӗрулмин 0,16-мӗш пайӗпе вӗри апат ҫитересшӗн мар пулӗ те...

0,16 гектар ҫӗрулми пур тесшӗн пулнӑ та, гектар сӑмаха сиктерсе хӑварнӑ. Курӑнать ӗнтӗ ӗҫе мӗнле туни. Ҫӗрулми ҫинчи ҫумсене ҫумламан, речӗсене купаламан.

Шкулта директорсӑр пуҫне Антоновӑпа Васильева учительницӑсем пур. Анчах вӗсем те вӗренӳ ҫулӗ пӗтсенех яла — каникула тухса кайнӑ. Ҫапла вара кунга хӗле валли пӗр пуленкӗ те вутӑ хатӗрлемен. Колхоз тата ялсовет председателӗсем те шкула пулӑшассишӗнех ҫунмаҫҫӗ. Ялсоветӑн шкул ӗҫӗпе ӗҫлекен комисси председателӗ Ф. Афанасьев юлташ хӑйӗн тивӗҫне маннӑ, нимӗн те туман.

Ӗнер ҫӗнӗ вӗренӳ ҫулӗ пуҫланчӗ. Шкулсен алӑкӗсем уҫӑлаҫҫӗ те хупӑнаҫҫӗ. Одаркӑри пуҫламӗш шкулӑн алӑкӗ вара уҫмасӑрах уҫӑ — ӑна, ҫӗмрӗк пирки, анккалла илсе хунӑ.

Т. ИВАНОВ.
(Хамӑр корр.).

МУРКАШ РАЙОНӖ.

ВЛКСМ Центральнӑй Комитетӗнче

Ялсенче кино кӑтартас ӗҫе лайӑх организациленӗшӗн Шупашкарти кинотеатрӑн киномеханикне Анастасия Григорьевна Исаева юлташа тата куҫса ҫӳрекен сасӑллӑ кино механикне Николай Матвеевич Матвеев юлташа (Хӗрлӗ Чутай районӗ) ВЛКСМ Центральнӑй Комитечӗн Хисеплӗ грамотипе наградӑланӑ.

Кашни жнейка, кашни комбайнпа молотилка халĕ кунĕн-çĕрĕн ĕçлемелле

Ака ĕçĕсене вĕçлесе, çĕртме тума тытăннă

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем августăн 29-мĕшĕ тĕлне 7792 гектар вырăнне 7803 гектар ыраш акса, государство планне ытлашшипех тултарнă, халĕ нумай колхозсенче кĕлтесене капана хывас ĕç ăнăçлăн пырать. Кĕлте турттарса пĕтернĕ хыççăн колхозсем кĕрхи çĕртме тума тытăнаççĕ. Паянхи кун тĕлне 260 гектар кĕрхи çĕртме тунă. Чылай колхозсем махорка касса пухаççĕ. 160 гектар çинчи махоркăна касса çакса хунă. Районри колхозсем тата 3—4 кунран тыră вырса пĕтереççĕ.

С. ШАДИН.
(Хамăр корр.).

* * *

ÇĔРПӲ, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Паянхи кун тĕлне район 6.560 гектар ыраш акса государство планне 100 процент тултарнă.

* * *

СОВЕТСКОЕ, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнерхи кун тĕлне районри колхозсем 6890 гектар ыраш акса, плана ытлашшипех тултарчĕç.

П. НИКИТИН,
ВКП(б) Советски райкомĕн секретарĕ.

* * *

Калинино, Вăрмар, Етĕрне, районĕсем сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне ыраш акмалли плана 100 проценчĕпех тултарнă.

Колхозсем пĕр-пĕрне пулăшаççĕ

Республикăра ыраш акса пĕтернĕ районсен шучĕ ÿссех пырать. Малта пыракан 7 район хыççăн паян Красноармейски район ыраш акса пĕтерни çинчен пĕлтерчĕ. Ишлей, Вăрмар, Шăхасан, Елчĕк районĕсем те плана 93—94-шар процент тултарнă. Елчĕк районĕнче 56 колхозран 38 колхоз ыраш акса пĕтернĕ. Малта пыракан колхозсем юлса пыраканнисене пулăшаççĕ. Сăмахран, «Новая волна» колхоз юлса пырать, ăна ыраш акас ĕçре социализмлă пулăшу пама Крупская ячĕпе тăракан колхоз 20 лаша, «Марс» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсем 10-шар лаша янă. «Комбайн» колхоза та «Красные Тимяши» колхоза пулăшма 10 лаша янă.

Кашни килограмм тырăшăн кĕрешмелле

ЭЛЕК, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Тырпул вырса пухасси районри колхозсенче çаплах çителĕксĕр хăвăртлăхпа пырать. Паянхи кун тĕлне 78 колхозран 2-шĕ кăна тыră вырса пĕтернĕ, районра пурĕ татах 9500 гектара яхăн вырмалла. Уйрăмăнах «Доброволец», Молотов, Ворошилов ячĕсемпе тăракан колхозсенче ĕç япăх пырать. Кунта уйăх ытла тыră выраççĕ, анчах çурри кăна вырса пухнă. Кунта чăн малтанах дисциплина çукки ĕçе чăрмантарать. «Доброволец» колхозра 6 бригада. Августăн 29-мĕшĕнче уяр та хÿхĕм çанталăк тăчĕ. Çапах та кунта пĕрремĕш бригадăри колхозницăсем кăна ĕçе тухнă, ыттисем пĕтĕмпех майăр татма е хăйсен ĕçне тума кайнă. Колхоз председателĕ Бочков юлташ ĕçе организацилес вырăнне, колхозниксене бригадăран бригадăна куçарса пăтраштарса янă. Ĕç кунĕ кунта 9—10 сехетре пуçланать, ĕçрен вара каçчен чылай малтан кĕреççĕ.

Кĕлте кÿресси те начар пырать. «Комбайн» колхозăн 325 гектар çинчен кĕлте турттарса капана хывмалла, паянхи куна пурĕ те 20 гектар çинчен кăна турттарса капана хывнă.

Авăн çапма нумай колхозсенче çак кунсенче кăна тытăннă. Уйкасри Буденный ячĕпе тăракан колхоз 17 гектар çинчи тырра, «Комбайн» колхоз 16 гектар çинчи тырра çапнă. Тыră вырса пухас ĕçре пысăк тăкаксем тăваççĕ. Тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, çуртыррисене вырса пухнă çĕрте Буденный ячĕпе тăракан колхозра кашни гектар çинче вăтамран 57 килограмм, «Трактор» колхозра 98 килограмм уя тăкăнса юлать. Анчах кунта тыră тăкăннине килĕшеççĕ. Ĕçе типтерлĕ туса пыма тăрăшмаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Йĕпреç тата Куславкка МТС-ĕсем комбайнсемпе тыră вырса пухмалли плана тултарнă

Йĕпреç МТС-ĕн директорĕ Г. И. Иванов юлташ пĕлтернĕ тăрăх, сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 12 комбайнпа 1.500 гектар вырса пухнă. Çапла вара, комбайнсемпе вырса пухмалли планран ирттерсе 300 гектар вырнă. Комбайнерсенчен А. Иванов юлташ малта пырать, вăл ĕнерхи кун тĕлне 200 гектар ытла вырса пухнă. А. С. Сергеев комбайнер 180 гектар, П. М. Маркиянов 130 гектар вырса пухнă. Тырăсене комбайнсемпе вырса пухас ĕç малалла та ăнăçлăн пырать.

* * *

Куславкка МТС-ĕн директорĕ Лаврентьев юлташ пĕлтернĕ тăрăх, МТС-ри 12 комбайнпа 1.204 гектар вырнă, çапла вара плана тултарнă.

* * *

Елчĕк МТС-ĕн директорĕ П. А. Ялин юлташ комбайнсемпе 1,000 гектар вырни çинчен пĕлтерчĕ. Комбайнер Долгов юлташ малта пырать, вăл 160 гектар вырса пухнă. Указов комбайнер 140 гектар вырса пухнă.

* * *

Етĕрне МТС-ĕнчи комбайнер В. И. Токсубаев юлташ, Çĕмĕрле МТС-ĕнчи И. И. Михайлов комбайнерпа ăмăртакансем, августăн 31-мĕшĕ тĕлне 155 гектар вырса пухнă.

* * *

Шăмăршă МТС-ĕнче комбайнсемпе 600 гектар вырса пухнă. Комбайнер В. Т. Фадеев юлташ 143 гектар вырнă.

* * *

ЧКАЛОВСКОЕ. МТС директорĕ Архипов юлташ ĕнер телефонпа çапла пĕлтерчĕ: Шăмăршă МТС-ĕнчи Фадеев комбайнерпа ăмăртакан К. З. Валеев юлташ сентябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 185 гектар вырса пухнă. МТС-ри мĕнпур комбайнсемпе 700 гектар вырнă.

Графика ирттерсе тултараççĕ

ÇĔРПӲ, августăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри чылай колхозсем государствăна тыră леçмелли графика ăнăçлă тултарса пыраççĕ. Юлашки пилĕккунлăхра районри колхозсен 350 тонна леçмелле пулнă пулсан, вĕсем 431 тонна леçнĕ. Паянхи кун тĕлне «Цивильстрой», «Кульмет» «Этна», Киров ячĕпе тăракан колхозсем графика ирттерсе тултарчĕç. «Планета» колхоз (председателĕ Семенов юлташ) график тăрăх 146 центнер леçес вырăнне 153 центнер леçрĕ.

Вĕрмер ялсоветне 5 колхоз кĕрет, вĕсем пурте графика лайăх тултарса пыраççĕ. Ялсовет председателĕ Елисеева юлташ государствăна тыră леçес ĕçе лайăх организациленĕ.

Августăн 29-мĕшĕнче районра Хĕрлĕ обоз организацилерĕмĕр, çав кун вара пурĕ государствăна 11.100 пăт тыră панă. Хĕрлĕ Çар фронтра чаплă çĕнтерÿсем тунине пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем ĕçпе ответлеççĕ. Тыră памалли обязательствăсене партипе правительство кăтартнă срокра пурнăçлассишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ.

Д. МИТЬКОВ,
ВКП(б) райкомĕн секретарĕ.

Вăкăрсемпе ĕçлеççĕ

СОВЕТСКОЕ, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (Телефонпа). Мăн Пакăшри «Красный партизан» колхоз правленийĕн членĕсем тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕ тунă чухне туртăм вăйĕ çитменни çинчен шутласа ларнă. Çавăнта 70 çулхи Л. Березин юлташ лайăх канаш панă:

—Колхозра кастрат вăкăрсем пур, çавсене ĕçе вĕрентмелле, — тенĕ вăл. Березин юлташ вăкăрсене кÿлме вĕрентнĕ. Вăл Украинăра вăкăрсемпе ĕçлени çинчен калаçнă, вăкăрсене кÿлме кирлĕ инвентарь хатĕрлес ĕçе йĕркеленĕ.

Чăн та ик часах 4 вăкăра кÿлсе çÿреме вĕрентрĕç. Ыраш вырса пуçласанах Березин юлташ вăкăрсемпе кĕлте турттарма тытăннă. Кунне 12 лав турттарас вырăнне 16—17 лав турттарнă. Çак ĕçе А. Петровăпа В. Антонов çамрăксене те вĕрентнĕ. Вĕсем вăкăрсемпе лашасемпе пĕр танах ĕçлеççĕ.

Березин юлташ кÿршĕри «Большевик» колхоза та пулăшу панă. Икĕ вăкăра пĕрле кÿлсе çапнă тырра амбара е уя вăрлăха турттараççĕ.

Районти ытти колхозсенче те вăкăрсемпе анлăн усă кураççĕ. «Крестьянская газета» колхозра 20 вăкăра, «Новый быт» колхозра 10 вăкăра ĕçлеççĕ.

Я. СИГАЕВ.

Ĕçе йĕркелеме тăрăшман председатель

СЕНТĔР. Мăн Сĕнтĕр ялсоветĕнчи «Ударник» колхозра (председателĕ Сыроз юлташ) тырпул пухса кĕрес ĕç ăнăçлăн пулса пырать. Колхоз кĕрхи тырăсем акса пĕтерчĕ. Тыră вырнă вăхăтрах пĕр чăрăнмасăр авăн çапаççĕ. Колхоз государствăна тыră памалли графика ытлашшипех тултарса пырать.

Анчах юнашарти «Париж Коммуни» колхозра вара ĕçсем пачах та урăхла. Кунта кĕрхи тырăсене ытти нумай колхозсем вырса пĕтернĕ хыççăн та 3—4 кун вырчĕç. Кĕрхи тырăсем акас, çуртыррисем вырас ĕçсем колхозра чăтма çук сÿрĕк пулса пыраççĕ. Колхоз председателĕ Пугачев юлташ ĕçе йĕркелеме пĕлмест. Вăл машинăсемпе ĕçлессине хирĕç тăрать. Колхозăн 2 сеялка пур, анчах вĕсемпе кунта усă курмаççĕ. Унсăр пуçне, ыраша лайăх çемçетмен çĕр çине акса, агротехника правилисене пăсаççĕ. Кĕрхи тырăсене кунта çурри кăна акнă. Колхозăн татах 35 гектар çĕртме сухи тумалла, апла пулин те колхозра лашасемпе туллин усă курма пĕлмеççĕ.

Колхозниксем ĕçе 9—10 сехетре тухса, хĕвел анса ларичченех каялла кĕреççĕ. Хăшпĕрисем ĕçре 5—6 сехет кăна пулаççĕ. Вĕсем, мĕн чухлĕ, мĕнле ĕçленине никам та шута илсе пымасть. Бригадирсем çителĕксĕр ĕçленине пула, кунта июль уйăхĕнчен вара ĕçкунĕсене ĕç кĕнеки çине кĕртсе пыман. Унсăр пуçне, кунта йышăннă решенисене те пурнăçа кĕртсе пымаççĕ. Çаксене пула колхозниксен ĕç дисциплини чăтма çук япăх.

Колхозăн пĕр лобогрейка пур, унпа усă курмаççĕ. Пĕр жнейка, 2 косилка паянхи кунччен те юсамасăр лараççĕ. Çавăн пирки колхозра тырпулсене çурри кăна вырнă.

Тÿрех калас пулать, колхоз председателĕ Пугачев халăхпа çыхăнса ĕçлемест. Колхозниксем хушшинче сайра-хутра кăна пулкалать. «Манăн заместитель пур, ку ĕçсене вăл тума тивĕçлĕ», тет вăл.

Вăрнарсен чĕнĕвне сÿтсе-явса, кунта тивĕçлĕ решенисем йышăннă. Анчах вĕсем хут çинче кăна шутланса тăраççĕ. Государствăна тыră парасси те кунта вăрахăн пулса пырать. Иртнĕ пилĕккунлăхри графика 65 процент кăна пурнăçланă. Унсăр пуçне, ку колхоз государствăна утă пачах та паман.

Чăннипе каласан, Пугачев юлташ ĕçпе сахал интересленет, вăл ытларах эрех енне сулăнать. Кăнтăр кунĕнче те ÿсĕр çÿрет. Çакăншăн ăна ВКП(б) райкомĕ те хытă асăрхаттарнă, анчах Пугачев юлташ колхозри ĕçсене юсас тĕлĕшпе нимĕн те тумасть.

«Париж Коммуни» колхозăн юлса пыма нимĕнле сăлтав та çук. Колхозăн туртăм вăйĕ те, ĕç вăйĕ те çителĕклĕ. Ĕçе пĕлсе организацилени кăна кирлĕ.

З. СЕМЕНОВ.

Районсенчи хаçатсен уборка вăхăтĕнчи ĕçĕ

Районсенчи хаçатсен хальхи вăхăтри тĕп задачи — СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «1944 çулта тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен» йышăннă постановление пурнăçа кĕртме мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилесси пулса тăрать.

Республикăри районсенчи хăшпĕр хаçатсем çак задачăна тивĕçлипе пурнăçласа пыраççĕ. Йĕпреç районĕнчи «Колхоз пурнăçĕ» хаçат августăн 17-мĕшĕнче тухнă номерĕнче «Молния» колхозăн ĕçĕсем çинчен пуян материалсем пичетленĕ. Ку страницăра колхоз председателĕ, бригадирсем, колхоз счетоводĕ, уйрăм колхозниксем тата стена хаçат редакторĕ хăйсен уборка вăхăтĕнчи ĕçĕсем çинчен каласа параççĕ, ĕç опычĕпе паллаштараççĕ. Çакăн пек ĕçлеме вĕрентекен усăллă материалсене Вăрмар районĕнчи «Хĕрлĕ Ялав» хаçатра та курма пулать. Кунта малта пыракан «Дружба» колхозăн ĕçĕсем çинчен редакци работникĕсен материалĕсене мар, колхозниксен, конюхсемпе бригадирсен тата колхоз председателĕн Григорьев юлташăн материалĕсене пичетленĕ.

Анчах та чылай районсенчи хаçатсем ĕç опытне пичет урлă çутатса пырассине кирлĕ пек организацилемен. Чкаловски тата Канаш районĕсенчи хаçатсем информаци евĕрлĕ материалсем çеç парса пымаççĕ. Пĕр-пĕр колхоз ĕçĕ çинчен тĕплĕн çутатса çырнă материалсене сайра-хутра çеç тĕл пулма пулать. Районри хаçатăн колхоз пурнăçне тĕплĕн пĕлмелле, колхозри кашни ĕçпе интересленмелле, колхоз председателĕн, бригадирĕн, колхозникăн чи сывăх юлташĕ, пулăшаканĕ пулмалла. Ĕç мĕнле пынине районри хаçат тивĕçлипе çутатса пыраймасть пулсан, вăл епле организатор пултăр-ха?

Районсенчи хаçатсен колхозсем, бригадăсем, колхозниксемпе колхозницăсем хушшинчи социализмлă ăмăртăвăн организаторĕ пулса тăмалла. Анчах та Пăрачкав, Кувакино, Хĕрлĕ Чутай, Чкаловски тата ытти районсенчи хаçатсем хăйсен страницисенче социализмлă ăмăртăва тăтăшах çутатса пымаççĕ. Чкаловски тата Пăрачкав районĕсенчи хаçатсем Вăрнар районĕнчи ялхуçалăхĕнче малта пыракансем республикăри колхозниксемпе колхозницăсене чĕнсе каланине те пичетлемен. Паллах ĕнтĕ, çак хаçатсем колхозниксене района мала кăларассишĕн кĕрешмешкĕн мобилизацилеме тăрăшман. Çавăн пекех Комсомольски районри «Октябрь ялавĕ» хаçат та социализмлă ăмăрту ыйтăвĕпе çителĕксĕр çырать. Кунта çак вăхăта çитсе те хаçат страницинче «Хисеп хăми» туман.

Кĕлтесене капана хывса çитермен пулсан, тырра пухса илнĕ теме çук-ха. Çакăн çинчен районри хаçатсен колхозниксене лайăх ăнлантарса памалла. Вырасси, кĕлте кÿрсе капана хывасси тата авăн çапасси, государствăна тыră парасси — çаксем пурте пĕр вăхăтра туса пымалли ĕçсем. Пĕрине туса, теприне манса хăвармалла мар. Анчах та районсенчи хаçатсем ку ыйтусене çителĕксĕр çутатса пыраççĕ. Первомайски, Кувакино, Улатăр районĕсем авăн çапас ĕçе ытла та вăрахăн туса пыраççĕ. Пĕтĕм сăлтавĕ те — молотилкăсемпе туллин усă курманнинче. Çав районсенчи хаçатсем паянхи куна çитсе те молотилкăсемпе туллин усă курасси çинчен, каççенче те авăн çапас ĕçе йĕркелеме кирли çинчен нимĕн шарламасăр лараççĕ.

Ытти районсенчи хаçатсем те комбайнсемпе тата молотилкăсемпе мĕнле усă курни çинчен çырассине манаçа хăварнă. Хальхи вăхăтра уйрăмăнах авăн çапас ĕç çине тимлĕн çаврăнса пăхни кирлĕ. Государствăна вăхăтра тыră парса татасси сак ĕçе пĕлсе йĕркеленинчен нумай килет. Çавăнпа та вырăнти пичетĕн ку енĕпе те ĕçе тĕрĕс организацилеме пулăшмалла. Первомайски, Пăрачкав районĕсем государствăна тыră парас тĕлĕшпе юлса пыраççĕ пулин те, çак районсенчи хаçатсем çав ыйтупа пачах çырмаççĕ. Ку енĕпе лайăх ĕçлекен колхозсем, транспорт бригадисем çинчен, çак ĕçре лашасемпе, автомашинăсемпе тата вăкăрсемпе усă курни çинчен çырмалла. Çавăнпа пĕрлех государствăна тыră парас ĕçе чăрмантарса пыракан, правительство кăтартса панă графика тултарса пыман колхоз руководителĕсене критиклемелле.

Районсенчи хаçатсем массăна политикăллă воспитани парас енĕпе те пысăк вырăн йышăнса тăмалла. Анчах ку енĕпе районсенчи хаçатсен çитменлĕхсем чылай-ха. Калинино районĕнче радио та çук, центрта тухакан тата республикăри хаçатсем те çителĕксĕр пыраççĕ. Анчах апла пулин те, районри «Коммунизм ялавĕ» хаçат хăйĕн страницисенче фронтран килекен хыпарсене сахал пичетлет. Ытти хăшпĕр хаçатсем партипе комсомол пурнăçĕнчен аякра тăраççĕ, агитколлектив руководителĕсен, уйрăм агитаторсен, вулав çурчĕсен ĕçри опычĕсем çинчен сахал çыраççĕ.

Хăшпĕр хаçатсем колхозсенчи, бригадăсенчи стена хаçачĕсемпе, «боевой листок» редакторĕсемпе çыхăну тытмаççĕ, вĕсене ĕçре пулăшса пымаççĕ. Сăмахран, Калинино районĕнчи «Коммунизм ялавĕ» хаçат июльпе август уйăхĕсенче стена хаçачĕсен обзорне пĕре те паман. Вырăнти хаçатсен тепĕр пысăк çитменлĕхĕ вăл — авторсемпе активлăн ĕçлеменни, корреспондентсен йышне ÿстерменни.

Тырпулсене пухса кĕртес ĕçĕн татăклă кунĕсем çитрĕç. Вĕсем пирĕн ăнăçусене татса паракан кунсем пулма тивĕçлĕ. Çавăнпа та уборка ĕçне татăклăн хăвăртлатмалла. Çак ĕçре вара пирĕн пичетĕн пысăк вырăн йышăнса тăмалла.

Е. ВАСИЛЬЕВА.

Францири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пĕлтернине пĕлтерет. Пĕлтерÿре çапла каланă:

Августăн 30-мĕшĕнче союзниксен бронетанковăй вăйĕсем Сена шывĕн анатри юхăмĕнче тунă укреплениесем патĕнчен çурçĕрелле хăвăрт куçса пынă. Малти часем Амьен хулине пырса кĕресси халĕ мĕн пурĕ те 20 миля кăна юлнă.

Кунтан хĕвеланăçнерехре союзниксен çарĕсем Руан хулинчен 8 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехри пункта çитнĕ.

Союзниксен чаçĕсем Парижпа юнашар çурçĕр енче ларакан ялсен хыçĕнче çĕнĕрен малалла куçнă. Союзниксен хĕвелтухăç еннелле наступлени туса пыракан çарĕсем Реймс хули патне çитнĕ.

Марна шывĕн улăхĕнче союзниксен çарĕсем Марна урлă каçнă та Эпернэ хули патне çывăхарса çитнĕ. Марна шывĕ урлă ку районран тăвалларахри вырăнта каçнă çарсем Шалон хулипе Реймс хули хушшинчи çул çине тухнă.

Августăн 30-мĕшĕнче Çурçĕр-хĕвелтухăç Франци районĕнче союзниксен авиацийĕ, çанталăк пĕлĕтлĕ тăнă пирки, вăйлă кĕрешеймен.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ВЕРДЕН ХУЛИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен çарĕсем Верден хулипе крепоçне тытса илнĕ. Верден хули вăл Бельги чиккинчен 26 мильăра çеç ларать.

КАНАДА ÇАРĔСЕМ ДЬЕПП ХУЛИНЕ ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН сентябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин канадецсен Францири 1-мĕш çарĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Канада çарĕсем Дьепп хулине пĕр çапăçусăр йышăннă.

СОЮЗНИКСЕН ÇАРĔСЕМ ИТАЛИ ЧИККИ УРЛА КАÇНА

АЛЖИР, сентябрĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Алжирти радио пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Кăнтăр Францири çарĕсен малти отрячĕсем Вентимилья районĕнче Итали чикки урлă каçса кайнă.

ФРАНЦУЗ ХАЛĂХĔН ИРĔКЛĔХ КОМИТЕЧĔ АЛЖИРТАН ПАРИЖА КУÇАТЬ

СТАМБУЛ, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви Алжиртан çапла пĕлтерет: Француз халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн членĕсем Алжиртан Парижа кайма тухнă. Çавăн пекех тата Вăхăтлăх консультаци ассамблейин президиумĕпе секретариачĕ те Алжиртан кайма тухнă.

Çурçĕр Африкăра Француз халăхĕн ирĕклĕх комитечĕн ячĕпе малашне портфельсĕр комиссар Катру генерал ĕçлесе тăрать.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пĕлтернисем

ЛОНДОН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Кăнтăр Францире 7-мĕш арми фронтĕнче Америка çарĕсем Монтелимар çывăхĕнче Рона шывĕ çине тухнă. Юлашки кунсенчи çапăçусенче союзниксем тăшмана йывăр çухатусем кÿнĕ. Нимĕçсем кунта хăйсен хĕвелтухăçĕнчи флангне хăрушлăхран çăлса хăварма хăтланнă. Марсель хулипе Тулон хули районĕсенче французсен çарĕсем тăшман хирĕç тăракан вырăнсене пĕтерсе тăкассишĕн çапăçаççĕ, вĕсем кунта 7.000 çынна ытла тыткăна илнĕ. Кăнтăр Францири çапăçусем пуçланса кайнăранпа кунта 30.000 çынна ытла тыткăна илнĕ. Союзниксем тăшмана тапăнма çирĕплетнĕ плацдармăн хĕвелтухăç çыранĕнчи флангĕнче американецсен малта пыракан чаçĕсем темиçе тĕлте Вар шывĕ çине тухнă.

Италире, фронтăн Адриатика хĕрринчи участокĕнче 8-мĕш арми чаçĕсем Фано хулипе юнашар ларакан ялсене пырса кĕнĕ.

Августăн 27-мĕшĕнче йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, Блекхамер хулинчи (Силези) синтетически нефть туса кăларакан икĕ завода тапăннă. Çакăнпа пĕр вăхăтрах союзниксен самолечĕсем, йышлăн вĕçсе кайса, тăшманăн Çурçĕр Италири, Кăнтăр Францири тата Югославири вăрçă объекчĕсене пыра-пыра тапăннă.

ЛОНДОН, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Италире 8-мĕш армин Адриатика секторĕнче кĕрешекен малти отрячĕсем Метаура шывĕнчен çурçĕртерехри укреплениене аслăлатса пынă. Тăшман унта хытăрах хирĕç тăма пуçланă. Фронтăн ытти секторĕсенче «Гот линийĕ» патнелле куçса пынă. Адриатика секторĕнче Фано хулине тăшмантан тасатнă. Флоренци секторĕнче паллă улшăнусемех пулман.

Кăнтăр Францире 7-мĕш армири француз çарĕсем Марсель хулинче тата унтан хĕвеланăçнерехри Фриуль утравĕ çинче нимĕçсен юлашки çарĕсене пĕр сăмахсăрах парăнтарнă. Тулон районĕнче те, Сен-Мандрие çурутравĕ çинче, нимĕçсен гарнизонĕ парăннă. Çак икĕ хулара темиçешер пин çынна тыткăна илнĕ. Американецсен 7-мĕш армири чаçĕсем Рона шывĕн улăхĕнче Монтелимар районĕнче малалла куçса пынă. Унта вĕсем тăшман пăрахса хăварнă автомашинăсем тата снаряжени нумай тытса илнĕ. Унтан кăнтăртарахра француз çарĕсем темиçе тĕлте Рона шывĕ урлă каçнă. Çав шывăн хĕвелтухăç хĕрринче Америка çарĕсем Ванс хулипе Кань хулине кĕрсе кайнă.

Союзниксен авиацийĕ августăн 28-мĕшĕнче Австрири, Венгрири, Çурçĕр Италири тата Кăнтăр Францири нефть промыслисене тата чугун çулсене атакăланă.

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерÿре çапла каланă:

Кăнтăр Францире Америкăн 7-мĕш армири чаçĕсем Рона шывĕн улăхĕнче Монтелимар хулинчен çурçĕртерехре тăшмана йывăр çухату кÿнĕ. Унта халь те çапăçусем пыраççĕ-ха.

Рона шывĕнчен хĕвеланăçнерехре француз çарĕсен малти чаçĕсем Баньоль хули патне çитнĕ. Фронтăн хĕвелтухăç флангĕнче Америка çарĕсем Вар шывĕн хĕвеланăç хĕрринчи позицисем çинче çирĕпленсе тăраççĕ. Юлашки хыпарсем тăрăх, çапăçусем пуçланнăранпа 45.000 çынна яхăн тыткăна илнĕ.

Италире 8-мĕш арми анлă фронтпа «Гот линийĕ» патнелле куçса пырать.

5-мĕш арми фронтĕнче çаплах патрульсем хытă кĕрешеççĕ.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хÿтĕлесе пынипе, августăн 29-мĕшĕнче Моравири (Чехословаки) икĕ нефть заводне, сортировка станцине тата промышленность объекчĕсене атакăланă. Самолетсен тепĕр ушкăнĕ тăшманăн Италири, Югославири, Грецири çапăçу районĕсенчи объекчĕсене тапăннă.

ПĔРЛЕШУЛЛĔ ШТАТСЕН ТИНĔС-ÇАР МИНИСТРĔ КĂНТĂР ФРАНЦИЕ ДЕСАНТ АНТАРНИ ÇИНЧЕН ТĔПЛĔНТЕРЕХ КАЛАНИ

ВАШИНГТОН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс-çар министрĕ Форрестол Вăтаçĕр тинĕс районĕнчен таврăннă. Вăтаçĕр тинĕс районĕнче вăл Кăнтăр Францие пырса кĕме хатĕрленекен çарсене пăхса вĕрентсе çÿренĕ. Таврăнсан пресс-конференцире çапла каланă: Кăнтăр Францие десант антарни, ĕçĕн анлăшĕ енчен пăхсан, Норманди çыранне десант антарнинчен çеç каярах тăрать. Десант антарнă çĕрте тĕрлĕ йышши пин суднăпа карап пулнă.

Кăнтăр Францире кĕрешекен 7-мĕш, армире Англи, Канада, Америка тата Франци дивизийĕсем, пулăшакан чаçсем, парашютлă çарсем тата ыттисем те пур. Парашютлă çарсем питĕ пысăк ĕç тунă. Вĕсен артиллери тата десант антарсанах кирлĕ пулакан материалсем пулнă.

Америкăн Кăнтăр Францие десант антарнă çĕрте пулнă тинĕс-çар вăйĕсен шутĕнче 3 кивĕ линкор, 3 йывăр крейсер, 5 çăмăл крейсер, 2 авианосец тата 47 эсминец пулнă.

ЛЮКСЕМБУРГ, ЭЛЬЗАС ТАТА ЛОТАРИНГИ РАЙОНĔСЕНЕ ВĂРÇĂ ПЫРАКАН ЗОНĂСЕМ ТЕСЕ ПĔЛТЕРНĔ.

СТОКГОЛЬМ, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Морган-Тиднинген» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕç влаçĕсем Люксембург, Эльзас тата Лотаринги районĕсене вăрçă пыракан зона тесе пĕлтернĕ. Кунта пĕтĕм влаçа çар командованин аллине панă. Ку зонăра халăха куçса çÿреме чарса лартнă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен пĕлтернĕ тăрăх, Югославин ирĕклĕх халăх çарĕн верховнăй штабĕ çапла пĕлтерет: Сербире пур участоксенче те пирĕн чаçсем ăнăçлă наступлени туса пыраççĕ. Златибор секторĕнче болгарсемпе четниксен Цикоты хули çине наступлени туса пынă колоннине аркатса тăкнă. Хĕвеланăç Сербире Югослави чаçĕсем Частина хулине йышăннă, болгарсен 500 салтакĕпе офицерне вĕлернĕ, 80 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ. Трофейсем тытса илнĕ, çав шутра — 3 тупă. Хĕвелтухăç Сербире Соко Банья пунктне йышăннă. Морава тата Дунай еннелли çĕрсене тăшмантан тасатса пыраççĕ.

Черногорире ирĕклĕх халăх çарĕн чаçĕсем 10 кун оборонăра тăрса çапăçнă хыççăн хăйсем ăнăçлă наступлени пуçласа янă та тăшманăн Пива шывĕ хĕрринчи оборонине татнă. Хĕвелтухăç Боснире эсэсовецсен дивизийĕн Власеница хулине йышăнма хăтланнă чаçĕсене аркатса тăкнă. Тăшманăн 380 çыннине вĕлернĕ.

Ликăпа Горски Котарта Югослави чаçĕсем Бунич, Льюбово тата Дрежница пункчĕсене йышăннă.

ГРЕЦИ ХАЛĂХĔН ИРĔКЛĔХ ÇАРĔН ВĂРÇĂ ĔÇĔСЕМ

СТАМБУЛ, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Грецирен пĕлтернĕ тăрăх, Лидорика районĕнче тăшман çаплах наступлени туса пырать. Кунта тăшман хăйĕн Эпир, Фессали тата Çурçĕр Греци хушшинчи çулйĕрĕсене хăрамалла мар тăвасшăн тăрăшать. Икĕ енĕ те çухатусем тÿсеççĕ.

Салоники районĕнче нимĕç грузовикĕсен колонни салтаксем турттарса пынă. Çул çинче Греци халăхĕн ирĕклĕх çарĕн боецĕсем засадăра ларнă. Çак боецсем нимĕç грузовикĕсен колоннине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Грек патриочĕсем çавăн пекех тата нимĕçсен Триккал патнелле каякан колоннине те вĕлерсе пĕтернĕ.

ДАНИ ХАЛĂХĔ ÇĔРШЫВШĂН КĔРЕШСЕ ВИЛНĔ ÇЫНСЕН ЯТНЕ АСĂНАТЬ

СТОКГОЛЬМ, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Датчансен «Ирĕклĕх Совечĕ» чĕннĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла 12 сехетре Дани халăхĕ Данире пĕлтĕр пулса иртнĕ ĕçсем вăхăтĕнче вилнĕ датчансене икĕ минута хушши пĕр шарламасăр тăрса асăнса иртернĕ. Копенгаген хулинче халăх куçса çÿресси йăлтах чарăнса ларнă. Магазинсенче, лавкасенче, конторăсенче тата учрежденисенче ĕçлекенсем пурте урама тухнă. Унта вĕсем, урамри мĕнпур халăхпа пĕрле икĕ минут хушши пĕр шарламасăр тăрса, тăван çĕршывшăн вилнĕ паттăрсен ятне чаплă асăнса иртернĕ.

Думбартон-Оксри конференцири виçĕ делегацин руководителĕсем пĕрле калани

ВАШИНГТОН, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Думбартон-Оксри конференцире хăрушсăрлăха сыхлакан пĕтĕм тĕнчери организацие тăвасси çинчен калаçма пуçланă хыççăн пĕрремĕш пресс-конференци туса иртернĕ. Унта Америка делегацийĕн председателĕ — Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарĕн заместителĕ Стеттиниус çапла каланă: конференцири делегацисем вăрçă хыççăнхи хăрушсăрлăх организацийĕн форми пирки пĕтĕмĕшлĕн калаçса татăлнă ĕнтĕ, тенĕ. Стеттиниус корреспондентсене Америка, Совет Союзĕн тата Англи делегацийĕсен руководителĕсен пĕрле çырнă çак заявленине вуласа панă:

«Пĕр-пĕринпе пĕр эрне хушши калаçнă хыççăн делегацин руководителĕсем çакăн çинчен пĕлтереççĕ: мирпе хăрушсăрлăха сыхлакан пĕтĕм тĕнчери организацие тунă чухне çаксене шута илме кирлĕ тесе сĕнесси пирки пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă:

пĕрремĕшĕнчен, мире юратакан мĕнпур çĕршывсен представителĕсенчен ассамблея тумалла, ăна тунă чухне пур çĕршывсем те пĕр тан шутланса тăмалла;

иккĕмĕшĕнчен, йышлă мар членсенчен тăракан совет тумалла, унта тĕп государствăсен представителĕсемпе пĕрле ытти темиçе государствăн вăхăтран вăхăта суйлакан представителĕсем те кĕмелле;

виççĕмĕшĕнчен, хирĕçÿсене мирлĕн татса памалли лайăх майсем тупмалла, çак шутра юристла майпа татса памалли ыйтусене майлаштармашкăн пĕтĕм тĕнчери суд тумалла, çавăн пекех тата мирпе хăрушсăрлăха сыхласа тăмашкăн кирлĕ пулма пултаракан ытти майсемпе те усă курмалла.

Делегацисем халь тĕрлĕ органсен структури çинчен тата вĕсем мĕнле ыйтусене сÿтсе-явма пултарни çинчен, çавăн пекех тата вĕсен ĕç меслечĕсем çинчен сÿтсе-яваççĕ. Çак ыйтусене питĕ тĕплĕн пăхса тухмалла. Хальхи вăхăтра çак тĕлĕшпе тĕрлĕ сĕнÿсем панă, вĕсене тĕпчесе пăхса тухĕç. Тĕрлĕ çĕршывсем тĕрлĕ сĕнÿсем пани тĕрлĕ делегацисен шухăшĕсем пĕр-пĕрне хирĕç пыни çинчен каламаççĕ, çакă вăл пĕтĕмĕшле тĕллев çине тĕрлĕ енчен пăхнинчен çеç килет. Эпир хамăр сĕнмеллине тĕплĕн шухăшласа пăхса хатĕрлесе çитернĕ хыççăн тата выводсем туса панă хыççăн пирĕн правительствăсем çав сĕнÿсене хăçан пичетлесе кăларма кирли çинчен каласа парĕç».

СЛОВАКИЕ ГЕРМАНИ ÇАРĔСЕМ ОККУПАЦИЛЕНĔ

ЖЕНЕВА, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлер агентстви Германин информаци бюровĕ Словакие Германи çарĕсем кĕрсе кайни çинчен пĕлтернĕ.

Чехословаки патриочĕсем нимĕç çарĕсене хирĕç тăнă

ЛОНДОН, августăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Чехословакин çар влаçĕсенчен пĕлнĕ хыпара парать. Унта çапла каланă: Чехословаки патриочĕсем Словакие оккупациленĕ нимĕç çарĕсене хирĕç тăнă. Чехословаки патриочĕсем Чадца хулине йышăннă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

Англи авиацийĕ Кенигсберг, Киль, Берлин, Гамбург, Эссен хулисене тапăннă

ЛОНДОН, августăн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен Европăри сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: августăн 25-мĕшĕнче кăнтăрла американецсен 1.100 ытла йывăр бомбардировщикĕ нимĕçсен Пеенемюндри сăнав станцине тапăннă. Кунта нимĕçсем самолет-снарядсене тата ракетăллă самолетсене сăнанă. Çавăн чухнех Германири ытти паха объектсене те, вăл шутра Висмар, Любек тата Росток хулисенчи авиаци заводĕсене тапăннă.

ЛОНДОН, августăн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: Англи бомбардировщикĕсем Хĕвелтухăç Пруссире Кенигсберг порчĕпе çар базине вăйлăн тапăннă. Ăна йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Вăйлă пушарсем тухнă.

Англи бомбардировщикĕсен ытти соединенийĕсем Киль хули çине 1.700 тонна бомба пăрахнă.

«Москито» йышши самолетсем Берлинпа Гамбург хулисене тапăннă. Çав операцисенчен 29 бомбардировщик каялла таврăнман.

ЛОНДОН, августăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен авиацийĕн самолечĕсем тăшманăн çурçĕр-хĕвеланăçĕнчи вăрçă объекчĕсене тата нимĕçсем оккупациленĕ Дани çыранĕсене атакăланă. Тăшман авиацийĕ хирĕç тăни пачах пулман.

Бомбардировщиксен пысăк соединенийĕ Рур облаçĕнчи синтетически нефть заводне тапăннă.

ЛОНДОН, августăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 29-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле «Москито» йышши самолетсем Эссен хулине тапăннă.

САМОЛЕТ-СНАРЯДСЕМ АНГЛИ ÇИНЧЕ

ЛОНДОН, августăн 31-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, августăн 31-мĕшĕнче ирхине ирех нимĕçсен самолет-снарячĕсем Англин кăнтăрти графствисем çинче, вăл шутра Лондон районĕ çинче те курăннă. Сиен тунă. Вилнисемпе аманнисем пур.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ШУПАШКАРТИ КИНОТЕАТР

сентябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа
КУНСЕРЕНЕХ
А. П. Чеховăн «Свадьба» ятлă произведенийĕ тăрăх тунă илемлĕ çĕнĕ фильм
«С В А Д Ь Б А»
кăтартать.
Сеанссем çак вăхăтра пуçланаççĕ: 12, 14, 16, 18, 20, 22 сехетре.
Билетсем малтанах илсе хума юрать. Касса ирхине 10 сехетрех ĕçлеме тытăнать.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНС ЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типографи № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР, Заказ № 2, ф. 6, 59×42 п. л. Тираж 16.000 экз.